31-305

Уйӑп Мишши

1 87

# Ҫамрӑк вӑй

ҪАВАШИСТАТ — 1931 — ШУПАШКАР

УЙАП МИШШИ

# ÇАМРĂК ВĂЙ

САВĂСЕМ

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР—1931

Послано в производство 10/IX—31 г.
Подписано к печати 7/XII—31 г.
Редактор Л. Агаков.

Отпечатано в типографии № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары

## Ăван комсомола.

*(ÇКИ уйавне).*

Пулин
Песыменски пек,
Шарăв пек пултăр,
Вăл маншăн та тĕрĕс,
Вăл маншăн та йултăр:
Куллен перона
Хут çинђе еп хăйрам—
Малтан комсомолĕс еп,
Сăвăç—
Кайран.

* * *

Каçар, кĕр кунĕ,
Аван мар сан кăмăл.
Ах, çапах ман
Ђĕрере—
Çу куњ.
Ах, çапахçке ђĕрере ман
Çăмăл...
Ман ђĕрен йĕрес йăла
Çук ун.

Ах, комсомоли—
Револ̧утси çарĕ!..

Çамрӑкран ес
Хурçӑлан пире.
Çавӑнпа еп
Çак йурра пуçарӑп,
Çак йурра
Йухтарӑп
Сан çирен.

Епӗ—санӑн.
Ђӗремпе,
Йунпа та...
Сансӑр епӗ
Кам пӗлет,—такам?
Ес мана
Хастарлӑ çӗн вӑй патӑн...
Есӗ—манӑн
Йертсе пыракан.
Савӑтра-и,
Колхосра-и епӗр,
Хулара-и, йе кашни йалтах:
Куллен кун
Кив пурнӑçа
Ишетпӗр...

Никӗслетпӗр çӗнӗрен
Йӑлтах.
Çамрӑк çар та
Мӑн ӗç ывӑçланӑ
Çӗршыва халђ
Хурçӑланӑ ђух.
Епӗр тытнӑ,
Пысӑк ӗç пуçланӑ,

Ăна пĕтермесĕр
Канăç çук.

Ах, нумайçке
Пирĕн тумаллийĕ...
Кавккасра...
Урал...
Йе Çĕпĕрте—
Комсомолăн
Ывăнмасӑ аллийĕ...
Вĕренет,
Ĕçлет вăл,
Хĕпĕртет.

Уйхирте
Тыр-пулă шерепеллĕ...
Колхоссен хирнеçке
Пуç тайан...
Пурнăç!
Пурнăç!
Трактăрпа проппеллĕр
Кĕввипе ӳсетпĕрçке
Пайан...

Ах, комсомоли,—
Револютси çарĕ!..
Çамрăкран ес
Хурçăлан пире.
Çавăнпа еп
Çак йурра пуçарăп,
Çак сăвва
Шăратăп

Сан çирен.

Есĕ—еп вăл.
Санпалах йалан еп,
Çуннă ҫух
Вĕренӳре,
Ĕçре...
Килĕ вăхăт:
Ватлăп, сухалланăп,
Анҫах çамрăк йулĕ
Ман ҫĕре!..

Шупашкар, 18-XI—29 ç.

## Епӗр—утарнӗк.

Кунсем
Тӳсме ҫук хӑвӑртлаҫҫӗ.
Ах, вӑхӑт
Ытлах хӗрнӗ ҫав.
Ҫӗршыв пайан—тимӗрӗҫ лаҫӗ,
Унта
Хурҫӑлаҫ пурнӑҫа.

Ҫӗршыв пайан
Пысӑк ӗҫ тытнӑ.
Мӗлйунлӑ алпа вӑл ӗҫлет.
Алли ун
Мосоҧсемпе хытнӑ,
Кив пурнӑҫа хӑвӑрт вӗҫлет.

Алли ун
Фронтра та пиҫнӗ,—
Ҫӗнтернӗ.
Ҫӗнтернӗ ӗҫре!
Васкавлӑ
Ҫӗн пурнӑҫ таппи ҫине
Епир хутшӑнма тивӗҫре.

Ӗҫҫамрӑк!
Пирӗн вутлӑ хастарлӑх
Вӑл аслӑ комун ђеђекки.

Кашнийён ђёри
Вуткăварлă.
Кашнийён
Ђёри çинђе
„Ким“.
Ђуралăх, асаплăх иртнĕ.
Малти-—
Йăлтах пирĕн, куратпăр,
Кирпĕђ çине
Кирпĕђ хуратпăр,
Шаккатпăр,
Ĕçлетпĕр,
Тăватпăр
Çĕн аслă комунă çуртне!

Найанлăх,
Йулхав пиртен тарнă.
Çук, епĕр пĕтернĕ ăна.
Пайан епĕр кашни—
Утарнĕк,
Кашни çĕнĕ куншăн çунать...

... Кунсем
Тўсме çук хăвăртлаççĕ.
Ах, вăхăт,
Ытлах хĕрнĕ çав.
Çĕршыв пайан—
Тимĕрĕç лаçĕ.
Васкар,
Хурçăлар
Пурнăçа.

Шупашкар, III—30 ç.

## Утарнĕксен маршĕ.

Пилĕк çуллăх картийĕ
Çĕршыв çине карăнҙĕ.
Тсемент,—
Петтон,—
Хурçă—ӳсĕм
Картийĕ.
Çĕршыв шăранаť
Ĕççын вутлă хастарĕнҙе,
Вăл—
Вĕри томнă,
Вăл—
Ĕç анкартийĕ.
Çап,
Ĕççыннийĕ!
Мăлатуккăпа
Çап!
Ес мĕн тунийĕн
Ес хăв кăна
Хуçа!

Ан пăх, ан пăх тăшман!
Пăшалпа мĕн йунатăн?
Ан сик ытла!
Çук, епĕр
Вăйсăр мар тинех,

Хамăр вăйа,
        Ђĕрене те,
                Йуна та
Епĕр паратпăр
Пĕр Ленинăн парттине.
        Пĕрре,
                Иккĕ,
        Виççĕ,
                Тăваттă,
        Мускăлсем хурçă,
        Хурçă хăват та.
Пĕр пĕђђенлĕхпеле сухана
Хуса йанă,
Трактăр хирте
Пур йăрансене
        Ваттăрах!
Сирĕл пиртен,
        Пур хăравçă,
                Найанĕ!
Пилĕк çула
        Тултаратпăр
                Тăваттăра.
        Тăр,
        Пайанах
        Еççын, пирĕн рете.
        Çапар найана,
        Хăравçа ђĕтретер.

Вĕри, çивĕђ хастарлăхпала
Хускатар епĕр
Пур колхоса,
        Савăта,

Хапрăка та.
Çав хастарпа
Пур ĕçе шăрантарăпăр
Утăр
Прикатă хыççăн
Прикатă!
Мускăлсем хурçă,
Хурçă хăват та.
„Пилĕк“ çине
Епĕр çырнă:
„Тăваттă!“
Çап,
Ĕççынниййĕ!
Мăлатуккăна
Çап!
Ес мĕн туниййĕн
Ес хăв кăна
Хуçа!..

Аслăпатăрйел, 21-IX—31 ç.

## Çук пуçлăх.

Хĕвел, ав,
    Куççулленнĕ.
Ав, куççулленнĕ
    Çил.
Пайан вĕт
    Вилнĕ
        Ленин,
Çилтăвăл
    Йăхравçи.
Пайан вăл
    Ђĕмсĕрленнĕ.
Пайан
    Хупнă
        куçне.
Мĕлйуншар çын
    Кулленĕн
Аснаççĕ
    пуçлăхне...
„Çук пуçлăх,—
    Çук Ленин...“
Тет савăт,
    Мĕкĕрет.
Куççулĕпе
    Хулленĕн

Хурланђăклăн
йĕрет...
Çук, çук!
Йĕрмест вăл
Савăт!
Тăкмасť вăл
Куççулне.
Ђĕнет пурне те,
авă,
Ленин
Йалавĕ
айне.
Уйхир,
вăрмансем
урлă
Сасси ун
йан
кайаť.
Уйхир, вăрман
шур йурлăн
Шăннăн
пуçне
тайаť...
Вĕт тăлăх
пайан йал,
Вĕт тăлăх
савăтсем.
Йал—савăт
алла-ал
Çирĕплетеç
ретне.

Çук пуçлăх,
Çук паттăр,
Ак унсăр
тăват çул,
Ун çулĕпех
утатпăр
Унтан
пăрăнас
çук!

*
* *

Курса ăна,
курсађђĕ,
Курсађђĕ
хам
куçпах.
Ђерет
кĕтсе
тăрсађђĕ
Телейлĕ кун—
каçпа.
Вăл ђĕрĕ пек
вырта ђђĕ
Ăш ăйăха
кайса...
Пиншерĕнех
утађђĕç
Ăна пуçне
тайса...
Çавна тек
аса илен.
Аса илетĕн

шав...
Умрах
хаљ
мавсолей...
Куç умĕнђех
Мускав...
Ес ан ӳле
кулленĕн.
Ан йĕр,
ан йĕр
ес, çил,
Мĕн тăвăн,
вилнĕ
Ленин.
Анђах
ретсем вĕт
çирĕп!..

. . . . . . . . . .

. . . . . . . . . .

Хĕвел ав,
куççулленнĕ,
Ав, куççулленнĕ
çил...
Пайан вĕт
вилнĕ
Ленин—
Ĕçхалăх
çулпуçи...

Шупашкар, 21-1--28 ç.

## Вăл ђĕрĕ.

Пурнăçа хурçăпа
Епĕр
Хаљ хурçăланă ђух,—
Кашнă кунах асилетпĕр:
Ленин
Пирĕнпе
Çук...

Ним канăçа та пĕлмесĕр
Ĕçпеле çуннă çĕрген—
Вилĕм алли
Шеллемесĕр
Илђĕ
Ăна
Пирĕнтен.

Вилĕм
Шыранине тупрĕ...
Катăлђĕ
Пирĕн йыш...
Ĕмĕрлĕх
Куçне хупрĕ
Аслă атте
Илйиђ...

„Вилҫӗ!
Атте пирӗн вилҫӗ!..
Пурте ӗҫе
Пӑрах!“
Сасӑ кӗрлесе илҫӗ—
„Ҫук вӑл...
Тӑрар таҫӑрах...“

Шарт та шарт сикрӗ ӗҫҫынӗн
Ҫӗрийӗ
Ӑна илтсенех.
Епӗр кулҫанмӑпӑр!
Ҫӗнӗ
Вӑйпа хуҫӑпӑр ретсене!

Ленин
Хӑй вилнӗ пулсан та
Йулнӑҫке
Парттийӗ ун.
Ҫамрӑк,
Пуҫа усса ан тӑр.
Ҫамрӑк!
Хастарлӑхпа ҫун!

Ленинӑн
Хурҫӑ
Парттийӗ—
Пирӗн ҫӗнтерӳллӗ ҫулпуҫ.
Епӗр
Ун ҫамрӑк квартийӗ,
Епӗр—мӗлйунлӑ ҫӑлкуҫ.

Епĕр—
Мĕлйунлă çăлкуçĕ,
Çĕн вăй вĕрсе тухĕ
Пиртен.
Кашниййĕн пайан
Сас уçă,
Кашниййĕ
Çак кун хĕпĕртет.

... Çукçке...
Илйиђ пиртен карĕ...
Кам калĕ
„Пур вăл“ тесе.
Анђах унăн йађĕ
Йулмарĕ
Çитмесĕр ниçти кĕтессе...

Пурнăçа
Хурçăпа епĕр
Хаљ хурçăланă ђух,—
Кашнă кунах асилетпĕр:
— Ленин...
Анђах... вăл—
Çук...

Вилнĕ...
Тапмасť ђĕри унăн...
Анђах ларас çук куљанса.
Ĕççынĕ
Мĕлйунăн,
Мĕлйунăн
Парттипе ђăмăртанса

Унӑн ёçне пиленнӗ...
Йурӑсем вӗçҫӗр инçе!
Ҫӗрӗ вӑл,
Аслӑ Ленин
Кашни
Ёççын
Ҫӗринҫе!

Шупашкар, 21-1—20 ç.

## Савӑт шавӗ.

Савӑт! Савӑт!.. Кивӗ, тӗксӗм
Корпуссем ђӗтреççӗ.
Мӑрйисем пит çӳллӗ, вӗççӗр,—
Пӗлӗте тӗтреççӗ.

Çук, кунта хӗртмест хӗвелӗ,
Çук, кунта йӑлт урӑх.
Ку тӗнђе хура çилхеллӗ,
Кунта тимӗр хурӑç.

Ах, хӑрушӑ!
Айакран
Тимӗр каски йӑтнӑ
Йӑр, йӑр, йӑр тӑваť аккран,
Ес тӑратӑн... хытнӑ...

Хурçӑ-тимӗр—ах, тискер,
Шӑранаť хӗпхӗрлӗ...
Ман ђӗремӗм, хиртискер,
Шиклӗ ђӗп йеверлӗ...

Ӗçлекенӗ ав шаккаť,
Ӗçӗ вӗт ун çавӑ.
Çук хаљ выçӑхнӑ шаккал,
Хӑй кунта хуçа вӑл.

Таврара вӗлт, вӗлт сикеҫҫӗ,
Машшинсем ташлаҫҫӗ.
Ей, васкар, васкарха, теҫҫӗ
Хӑвӑрт хӑвӑртлаҫҫӗ...

Еп пайан вӗт пурҫӑн ҫиллӗ
Ылттӑн уйран килтӗм...
Васкӑр, васкӑр, ђупӑр, выђӑр,
Сирӗн йурра итлӗп!..

Пуҫӑмра вӑрман кашлавӗ,
Лӑпкӑ ир илемӗ.
Куҫӑмра ак савӑт шавӗ,
Кам ӑна итлемӗ?

Ав станок, станок хаваслӑ.
Шеҫтернепе туслӑ.
Ех, выђаӗ! Ес хӑв та ташлӑн
Хӑв йурруна пуҫлӑн...

Уйхирте епӗр ҫуралнӑ,
Уйхирте вӗт ӳснӗ.
Хӗвелте пиҫсе хуралнӑ,
Хӗвелте те тӳснӗ.

Ех, выраттӑмӑрђђӗ пӗлтӗр,
Пурҫӑн йаркӑђ тийӗн—
Ӑшӑ ҫилӗ... Шӗлтӗр-шӗлтӗр
Сӗлӗ шерепийӗ...

Симӗс улӑх, ылттӑн уйӗ,
Шав шавлан вӑрманӗ...
Савнӑ йалӑн савнӑ туйӗ,
Кивӗ ҫиђарманӗ...

Аҫаран вӗт еп йуратнӑ
Ҫавсене пурне те.
Йуратма мана ҫуратнӑ,
Йуратма анне те...

Савӑт манӑн ҫӗрене
Илӗртет, кураттӑри?
Машшинсенӗн йуррине
Манӑн ҫун йуратрӗ...

Ех, еп хам та пайан кун
Савӑт ывӑҫ пулӑттӑм.
Ах, станокӑм, ай, ан кул,
Сан патах еп йулӑттӑм!

Сан патах еп йулӑттӑм,
Санпалах еп йурлӑттӑм,
Санпалах еп йурлӑттӑм,
Хавасланса кулӑттӑм.

Пирӗн йурӑра шӑранӗ
Пур ӗҫхалӑх тавӗ.
Пирӗн йурӑра шӑранӗ
Ҫӗнтерӳ мухтавӗ...

Ҫук, кунта хӗртмест хӗвелӗ,
Ҫук, кунта йӑлт урӑх,
Ку тӗнҫе хура ҫилхеллӗ,
Кунта тимӗр-хурӑҫ.

Шупашкар, 1928 ҫ.

## Тырпулăшăн!

Уйхир... Уйхир... Ĕмет куçа,
Ĕмет кăвак инçет.
Пăх, хум шавлать,
Пăх, хум куçать
Пуҫахĕсем çинҫе...

Леп çилĕ, çилĕ вăл сĕмсĕр
Пуҫахсемпе выљать.
Тӳпе тăрăх пĕр вĕçĕмсĕр
Шурă пĕлĕт хăвалать.

Пуҫахĕсем!
Ех, савăнăç!
Кам савмĕши кăна?
Йулашки хутах аванĕç,
Пуç тайĕç шнейккăна...

Пит лайăх вăрлăх акнăҫҫĕ
Çуса формалинпа.
Тем тăварсем те сапнăҫҫĕ
Унта акрономпа.

Кунтан кулма та пуçланҫĕç
Йалти хăш мушиксем.
Анҫах... хаљ куççем уçăлҫĕç
Тырă ӳснĕ ҫух сиксе...

Мĕн пек хавас пăхан ăна,
Мĕн пек пăхма тăрат.
Вĕт шухăшлаха, санăн ак
Çтан курас çав тырра?

Ăна акманçке кумăтпа,
Сапман муђи алпа.
Туртман кунта кив хăмăтпа,
Лаша пур вăйхалпа.

Суха ђухне тытман алла
Тађка сўс ђăпăркка.
Çук, кăшкăрман:
— Ну-у! Малалла!—
Тесе ват Çĕпиркка.

— Кайса хам сухалам ытах,
Сухана ватмасши?—
Темен...
Йăлт сухаланă та
Ĕçленĕ йăлт машшин.

Çук, çук алпа вырас та çук,
Никам та вырас çук.
Колхос хĕрĕ хура Таçук
Çурла тытмĕ ун ђух.

Пуђахĕсем...
Ех, савăнăç!
Кам савмĕши кăна?
Çил вĕрнипе кăшт авăнĕç,
Пуç тайĕç шнейккăна.

Çук, пĕрђĕн-пĕрђĕн пухмăпăр
Текех нађар тырра.
Йе турă çине пăхмăпăр
Кĕтсе çӳлти ырра.

Пĕлӳпелех çĕнетпĕр
Çак хытнă уйхире.
Нумай пусă çине тепĕр
Машшинăсем кӳрер.

Уйхир, çĕнел ес, улăшăн,
Машшинпала кĕрле.
Тырпулăшăн!
Тырпулăшăн!
Ĕçлер пурте пĕрле!

Шупашкар, 4-X—29 ç.

## Хĕрлĕ опоссем.

Тулта окťапĕр ирĕ.
Тулта кĕрхи тĕнђе.
Ах, ирĕл, пĕлĕт, ирĕл,
Çут тухăç вутĕнђе!—

Хĕвел хăпарнă майĕн
Вут тивнĕ тухăçа.
Мăн çул тăрăх нумайăн
Тулли лавсем куçаç.

Лашийĕсем саттуррăн
Утаççĕ хашкарах.
Кашни тийенĕ тырă
Леçме Шупашкара.

Малта пыраť çулпуçĕ—
Йалавлă хĕрлĕ лав.
Йе ун çинђе «улпуђĕ»—
Шăлаť мăн сухала.

Пеťук пиђђе вăл, уççăн
Куçа хĕссе кулаť:
— Ав, пăхăрха, ман хыççăн
Кама кĕтет хула?

— Епир мĕн пурĕ—аллăн.
Пин пăт патне тийенĕ.

Вĕт пирĕншĕн те паллă
Усламçăсен сийенĕ...

Кăçал ниçам памарĕç
Тырра усламçăна.
Çул пирĕн унпа мариç,
Мĕнма парас, ђăнах?..

Тар йухтарса ĕçленĕ
Çак хамăр тырпулла
Илеймĕ тин çĕленĕ
Йал кашкăрĕ—кулак.

Епир леçетпĕр авă
Ăна патшалăха
Вĕсем çавна кура вĕт
Пăсасшăн халăха...

Анђах... çук, халĕ иртрĕ
Епир—вĕсемпе мар!
Колхос—çĕн пурнăç çулĕ,—
Çĕн пурнăçшăн тымар!..

Ей, çухăр, хыттăн çухăр
Пайан кашни çăвар:
«Рапођђи ваљљи—çăкăр,—
Йала ваљљи—тавар!»

Йал хатĕр, хатĕр тăрĕ
Тыр пур тăк ытлашши...
Епир хулашăн тыră,—
Хула пире—машшин!..

Шупашкар, 1929 ç.

* * *

Ман сăввăм...
Çук,
Куççулшĕн шăранмарĕ.
Хăй ђăтнă епĕр,
Ђăтнă пирĕн ĕнсе.
Ăçтан йĕрес?
Вутпа çĕр хыпăнмари?
Телейлĕ кун
Çук пурнăç
Çакă мари?
Телейлĕ еп çавна çеç ĕненсе...

Ах, пурнăç,
Пурнăç!
Ес мари, урнă пуйăс?
Ес мари вăркăнатăн
Ĕрлешсе?

Пайан çĕршыв,
Мĕн пур вăрманĕ, уйĕ—
Машшин сассийĕн
Мусăкĕпе пуйĕ
Талккишĕпех
Пĕр ушкăн пĕрлешсе.

Çавна анђах,
Пĕр çавна çеç каласшăн
Пайанхи кун
Еп хамăн аннене.
Аннене мар,
Мĕн пур аннесене.
Куççулшĕн мар çунаç вĕсем,
Хавасшăн!

Шупашкар, 1930 ç.

## 1-мĕш май.

Ăçта хĕл ÿкмен тата.
Ей, хăш кĕтес?
Хăш кĕтес
çулăмпа
хыпăнман тата?
Тăр, хура халăх!
Мĕлйунлă вĕт ес,
Пусмăр вĕçне
çитес!
Тек
харам пыр
йунна ĕçсе ан тăтăр!
Ак, йăлкăшат
Пролеттари кунĕ.
Кам пайан пулĕ
килте лараканĕ?
Пăх:
ђĕтрет
кăпитталăн саккунĕ,
Кĕç
сирпĕнет
револђутси
вулкканĕ.
Пирĕн сасă:

„Ӳсетпĕр епир!“
Йалпала савăт
уççăн сывлаç.
Вĕт пирĕн те
Тĕнҫенĕн шăпи!
Пулĕ таçта та
хамăрăн влаç.
Пăхҫăр
хайаррăн
выç çăхансем,
Шăлне хăйраҫ ав,
куран,
Ҫĕмпĕрленĕ...
Вутлă çилтăвăл—
Вĕсемшĕн кансĕр,—
Кĕрле,
ĕнер
мĕнле
кĕрленĕ.
Çулăм
çĕре хыпасшăн—
курăр.
Тупăсем
ахăрасшăн лараççĕ...
Кӳлĕ пек йун
ыйтаҫ пуҫ турă?—
Вутлă сăннийĕсене
кăлараççĕ...
Авă:
мĕнле
вĕсен

„куӳттурĕ“!
Питĕ нумай çын
     çухатрăмăр епĕр.
Калăр,
     вĕсемшĕн йалавсене
          тайӳӳĕр.
Ес те
     тăван пирĕн,
          хура некăр,
Ӳăс
     аллуна кунта,
          киттайтсă.
Çĕр тутăхне
     вут çунтарĕ—
          сĕвелĕ.
Епĕри
     ырă кун курма
          тивĕççĕр?
Кашнишĕнех
     пăхаť
          хĕвелĕ!
Хурçă колоннăсем...
     вĕççĕр...
          пĕр вĕççĕр
Авă, пыраççĕ.
Хум çапăнман
     кĕтес
          шыраççĕ...
Кам пĕлмест—
     Мĕн сăнлă пуш уйăх?—
Сăнă

ывтасшăн
пирĕн çине!
Кам пĕлмест —
мĕн шыраŭ
пуршуйĕ?
Шыраŭ вăл ылттăн,
çĕр кăмрăкне,
Кирлĕ ăна
çĕр йунĕ —
нефт.
Тухăр пайан
урама
пурте!
Хурçă сассийĕпе
йурă йанратăр.
Тух,
пролеттари,
вăйна
кăтартма.
Пайан вĕт
пĕрĕмĕш Май...

Шупашкар, 13-IV-28 ç.

## Интернатсионал кунӗ

Пайан
халӑм çук ман ђӑтма
йурламасӑр,
Мӗлйунӑн йухан
Пӗр колонӑра ђух.
Ей, кам хаљ лараť
урама та тухмасӑр?
Тух!
Пролеттари вӑйне курма
тух!
Епӗр утатпӑр,
утатпӑр,
утатпӑр
Çутӑ,
телейлӗ
тӗнђе
патнелле.
Ленин кӑтартнӑ çулпахçке
пыратпӑр,
Хамӑр тӑшман
пӑшалне те
куратпӑр.

Еççарĕ,
унта куççене ес
тĕлле!
Пирĕн çул йăвăр.
Çул пит асаплă.
Анҫах йăнăшмастпăр,
пуçа та усмастпăр.
Кам хаҫ пĕлмест,
мĕн тăваҫ лере „ҫаплă“
(Кама ҫăсаҫ
аллине
„по-пратски“)
Толлăра
сутăннă
миçтĕр Тротски?
Ей, суйăрах, суйăр
Орлов,
Сумароккăв!
Тĕнҫе вăранаҫ ав,
пит йăвăр пулин те.
Çĕклет пуçне Çири,
йунланнă Марокко,
Киттай...
Куçне уçрĕ:
—Тăрас!—тет вĕт
Инти...
Вĕт çул пирĕн йăвăр.
вăл—
хĕпхĕрлĕ йунлă.
Ăçтан ахаҫ пултăр?
Вăл питĕ тăкаклă...

Анҫах ёҫынниййĕ
çĕршер пин,—
мĕлйунлă;
Вăл хăйĕнне тивĕç
пулин,
ирĕк хаклă!
Пулин
ытла пысăк
ĕç ирĕкĕн хакĕ,
Нимрен пысăкки вĕт
тăшманăн тăкакĕ!
Йăлт, пусмăр-ҫуралăх
тӳссе тăнă халăх
Пĕр сассăн
мĕлйунăн,
мĕлйунăн
тăрсассăн
„Йăлтах пирĕн пулĕç!—
ĕççын сасси çакă,—
Перлĕн,
Париш,
Нйу-Йорк,
Ҫиккако".
Ей, итлĕр—
Пилсутски,
Кувĕр,
Полтуинĕ,
Ку сасă сире
аçаçиçĕмĕн
туйăнĕ...
Калаҫ вĕт ăна

пур тĕнҫе
пролеттарийĕ,
Калаť вĕт ăна
пур тĕнҫе
ĕççарĕ...
Сарă киттайĕс,
йаппонĕ,
интейĕс,
Анкли,
Амерĕк,
йе нимĕç ĕççынĕ...
Некăр,
корейĕс те...
хирĕç мĕн тейĕç?
Унта йанăраť
пролеттари хăваҫĕ.
Кашнин ҫĕринҫе
аслă Ленинăн
йаҫĕ...
Сас, вĕç
таврана,
айала,
çўле.
Нихçан халиҫҫен
хĕм ўкмен
тĕле.
Ей, пролеттари!
Çирĕп утари?
Йунлă йалава
çўлерех
йăтари?

Хамăрăн
хурçă
вăйа
кăтартар!
Хурçă саспа
йурăна йанратар!
Йурăсем пирĕн,
тĕнђипе ĕрлешĕр!
Ей,
тĕнђери пролеттари,
пĕрлешĕр!
Тĕнђейĕн
шăпийĕ
санра вĕт,
ĕççарĕ!
Çак хамăр çула
кăкăрпа
уçари?
Ак çитĕ,
ак çитĕ,
телейлĕ кун пулĕ:
Хĕвел
кашнине
ăшăтса
ăшшăн пулĕ.
Хăватлăн
сан хурçă
тымаррусем
тапĕç...
Санра анђах тивĕç,
Ес çеç

йăлт çĕнтерĕн!
Сыв пултăр
тĕнђе
револђутсийĕн
штапĕ—
Коминтерн!..

Шупашкар, 29-IV-29 çул.

## Май йурри

Ав, пытаннă тĕнҫе
Ҫеҫексенĕн ăшне,
Ҫут хĕвел пуҫ ҫинҫе,
Сывлăш аслă...
Ей, тухар,
Уйавлар
Майăн пĕрĕмĕшне,
Йуррине те йурлар
Хурçă саслăн!

Ҫак куна,—
Еçпеле кĕрешĕвĕн кунне,
Ирĕкри ĕççыннишĕн хавасĕшĕн
Ҫеҫекпе илемлетнĕ
Аҫаш çуркунне
Пире çутă,
Телейлĕ тăвасшăн.

Ей, хĕвелĕ!
Ҫутат!
Пайан ес—ху хăна.
Пирĕнпе
Уйавраçке ес ху та.
Халăх... халăх утаť...
Тинĕс пек хумханаť...

Кашнин пиҫё—
Хаваслă та ҫутă.

Пирён йалав айёнҫе
Мёлйуншарăн аҫа.
Тата йертёр,
Йалав айне йертёр!
Кашни ҫыхнă майне
Хёпхёрлё хăмаҫа,
Кашни ҫамрăк хăйне
„Пионер!" тет.

Ҫирёп ут!
Ҫирёп ут!
Ҫирёп ут, пионер!..
Йанăратăр,
Хастар йурă йурлăр!
Ех, утатпăр... вёҫсем
Леш урам вёҫёнҫе...
Йурă, йурă, вёҫсем
Уй-хир урлă!

Ав, пытаннă тёнҫе
Ҫеҫексенён айне,
Ҫут хёвел пуҫ ҫинҫе,
Сывлăш аслă!..
Ей, утар,
Уйавлар
Майăн пёрёмёшне,
Йуррине те йурлар
Хурҫă саслăн.

Шупашкар, 1929 ç.

## Хӗрлӗ ҫассовой

Каллех ӳлерӗ урнӑ анҫӑк.
Каллех тӑвӑл сасси тапранҫӗ.
Хайар сив ҫилӗ шӑхӑрат...
Тавралӑх тӗттӗм те хура.
Хура пӗлӗтсем ҫӳлте хуплаҫҫӗ,
Теме сисетҫке урнӑ каҫӗ...
Хура пӗлӗтсем—пӗр сассӑр вӑй...
Ҫикӗре хӗрлӗ ҫассовой
Тӑрат. Винттовккӑ аллинҫе;
Витӗр куҫпе пӑхат инҫе,
Пӑхат вӑл ҫикӗ леш йенне.
Сыхлат ҫӗршывне хӑйӗнне.
Лере... кӗҫ, кӗҫ тапӑнас пек
Пӑшал та тупӑсен саспе
Мул йӑттисем вӗрсе тӑраҫҫӗ.
Пире пӑвасшӑн та... хӑраҫҫӗ...
Ҫирӗп тӑрат пирӗн ҫассовой—
Хӑватлӑ хурҫӑ массӑ—вӑй,—
Ӗҫҫынӗпе ун Хӗрлӗ ҫарӗ.
Пӗтерӗ вӑл кам мӗн пуҫарӗ!
Тӑвӑл кӗрлесе килнӗ ҫух
Хӑйне пӑвмашкӑн парас ҫук.
Пирӗн вӑй—хастарлӑ та хӗрӳ.
Пирте пулат ку ҫӗнтерӳ!

Лере ав, ҫикӗ леш йенҫе,
Урӑх пурнӑҫ, урӑх тӗнҫе.
Унта пусмӑр тӳсет ӗҫхалӑх.
Унта асап, унта ҫуралӑх...
Унта тар-йун, унта куҫҫуҫ...
Кӗрешӳ ҫеҫ пӗртен пӗр ҫул...
Ав, ҫикӗре тӑраҭ салтак.
Ҫын йуҫ ӗҫен ҫӗлен калта
Ӑна тӑратнӑ ҫикӗне,
Штыкпа...
Хӑйех ак, ҫикӗнет
Ҫыншӑн йантланӑ сӑннипе.
Йулаймӗ улталанипех!
Ӑҫтан ӗҫҫынӗн ывӑлех?
Ӑна каҫарӗ ахалех?
Ҫук! Ҫук! Вӑл, тӑвӑл килнӗ ҫух
Пире пӑшалпа тӗллес ҫук!
Кунта... Кунта ӗҫҫын ӗҫре.
Кашнӑ ӗҫҫын пӗр тивӗҫре.
Ишӗлҫӗк, ҫухӑн ҫӗршыва
Хӑвӑртласах хурҫӑ хываҫ.
Ӳсеҫҫӗ савӑт тӑрписем,
Ӳкеҫҫӗ ҫирӗк тӑррисем...
Хирте хаҫ трактӑр хыт ҫупаҭ,
Йӑрансене йӑлт сухалаҭ.
Ӳсет-ҫке хурҫӑ саслӑ вӑй?
Ҫикӗре хӗрлӗ ҫассовой
Тӑраҭ. Пӑшал ун аллинҫе.
Сыхлаҭ пире тӑшмансенҫен.

Шупашкар, 1929 ҫ.

## Октăпĕр хĕрарăмĕ

Шухăшласа йалт ăнтан карăм,
Шухăшласа тухаť тинке.
Мĕнлеха ак ĕнтĕ хĕрарăм,
Ак, ман умра Аӊук инке...

Ăçта ун ĕлĕкхи хуйхийĕ?
Ăçта ун сăнĕ ĕлĕкхи?
Çук, Аӊук мар ку,—урăххийĕ...
Çук, ку хĕрарăм—урăххи!..

Ун пусĕнђе хĕпхĕрлĕ тутăр,
Кĕнекесем ун аллинђе.
Пайан хĕвел те пĕрле пултăр,
Инкен хаваслă куллинђе!

Кулаťçке ав вăл, пит хаваслăн.
Вăл халђ телейлĕ вĕренет!
Уншăн тĕнђе те тем пек аслă.
Хĕвел те ăшă ђĕрине.

Ăна Октăпĕр ирĕк панă.
Октăпĕр уçнă ун çулне.
Вăлах çапса салатса йанă
Ĕмĕрхи пусмăрлăх ђулне.

Вӑл пур ҫӗрте те, пур ӗҫре те,
Пӗрлех пайан ӗҫре ҫунаť...
«Еп те ҫынпа пӗр тан вӗҫре! —тет,—
Еп те,—тет,—сирӗн пек ҫынах!»

Ахаљтен мар пуљ, аслӑ Ленин
Хушса хӑварнӑ пӗр сӑмах:
«Кашни кухаркка пӗлтӗр,—тенӗ,—
Патшалӑха йертсе пыма»...

Ҫак кун пурне те тивӗҫ пађӗ.
Тав уншӑн ҫут Окťапӗре!
Пӗр уншӑн ҫеҫ сӳнми хӑвађӗ
Ҫӗнетӗ тутӑхнӑ ҫӗре!..

Шупашкар, 1929 ҫ.

## Вĕренӳшĕн

Хĕвелтухăçĕнђе хитрен
Ылттăн хĕм сирпĕнет пĕлĕтрен.

Пĕлĕтсем ăна ђикнĕ хĕве...
Тухасах, тет, унтан хĕвел.

Ĕнер çеçђĕ тулта çулла..
Пайан ак, кĕрхи çил улаť.

Пайан ак кĕркунне тулта.
Çамрăксен шухăшсем—шкултах...

Çамрăк ђух вĕренес килет.
Уншăн шкул та тăван килех.

Ӳссе çитнĕ аппам Алђтин
Вĕренесшĕн çунаť хаљ тин.

Хитре пĕвлĕ, йаштак, çинçе.
Çĕн пуквар авă ун аллинђе.

Ман инке умĕнђе шур саппун.
Хаљ ăна йăхăраť ликпункт.

Кулленех хăй утаť шкула.
Ех, хавас! калаçаť те кулаť.

— Ёлӗк ҫеҫ пире ирӗк паман,
Ёлӗк ҫеҫ ҫынпа тан шутламан.

„Сирӗн ӗҫ– ҫӑкӑру та йашку,
Мӗн кирлӗ сире ҫав шкул“,—

Тесе ҫеҫ путараҌҌӗҫ пире.
Ирпе епӗ тӑраттӑм ирех.

Шӑп касҌен ӗшенеттӗм ӗҫре.
Упӑшка сӗтӗреҌҌӗ ҫӳҫрен...

Иртрӗ пуЉ вӑл ӗнтӗ ӗлӗкхи.
Тин мана хӗнемест Елекҫи.

Мӗншӗн, мӗншӗнха ман кӳренес?
Ёлӗк йулнӑшӑн хаЉ вӗренес!

Куҫҫӑрах ларас мар текех,
Пӑх, тытатпӑр кашни кӗнеке!—

Тет инке. Хӗпӗртенӗ хӑй пит...
Вӑр-р вӗҫет ҫилпеле кӗпи.

Таврара сивӗ ҫил улаҭ.
Йӑвӑҫсен тӑррине сулаҭ...

Инкене еп итлерӗм тӑрса.
Калас килҌӗ ун пек кӑшкӑрса.

— Куҫҫӑрах ларас мар текех,
Ей, тытарха кашни кӗнеке!

Шупашкар, 1928 ҫул.

## Колхосри каç

Тăптăрă уйăхлă каç.
Çăлтăр çӳлте нумай.
Пурте аҫашшăн пăхаç
Пит ăшăтаç ҫунăма...

Çук, апла мар, апла мар:
Çамрăк—урам тулли.
Ăшăтаť ҫунăма
Хĕр сáмаххи, кулли...

Йал ак лăпланҫĕ, шăп.
Çамрăксем çеç вăйăра.
Епĕ те хутăшăн
Ҫăсăп хавас йурра...

Хутăшрăм епĕ те...
Хĕрĕсем ҫĕвĕл ҫĕкеç...
Çут куçĕсем питех
Йĕп пек питрен ҫикеç...

Кулăрах! Кулăрсам!
Вăл килĕшет сире.
Савăр пĕр харăс тăрса
Пурăнăçри ире!

Çамрăкçке пуçăмăрсем.
Пирĕн вĕт—пуласси.
Çилĕ, ес ан йĕрсем,
Йут хаӡ куççуӡ сасси.

Епĕр ак колхосра.
Çук кунта кивĕ суха.
Пурăнăç хавасран
Иурă хастарлăн йухаť.

Кун—пĕрлешӳллĕ ĕçре.
Каç—хăй ĕшĕннипех
Савăнма тивĕçрен
Савăн хăв савнипе...

Хĕвелĕ çунса аннă ӡух
Урам варрине ес тух.
Вăл хурама кутĕнӡе
Кĕтет. Шухăшлаť сан çинӡен...

Тăптăрă уйăхлă каç...
Çăлтăр çӳлте пит нумай.
Пурте аӡашшăн пăхаç,
Пит ăшăтаç ӡунăма.

Çук, апла мар, апла мар!
Çамрăк урам тулли...
Ăшăтаť ман ӡунăма
Унăн сăмаххи, кулли...

Çăкалăх, 1929 çул.

## Уйӑрӑлнӑ каҫ

Анан хӗвелпеле хӗмленнӗ
Урам илемӗ хурама—
Ав, темшӗн, ман ҫине ҫилленнӗ,
Ҫӗнмест те кӗҫӗр урама.

Аслӑ урамшим уншӑн тӑвӑр?
Йе вӑл та сиснӗ: савнипе
Сывпуллашмашкӑн питӗ йӑвӑр
„Кайап,—тесе,—ыран ирпе...“

Ав, ҫамрӑксем выҫӑс хаваслӑн
Йӑлт тӗвӗленнӗ пӗр тӗвве.
Унтах ав, купӑс уҫӑ саслӑн
Шӑрантарать тӑван кӗвве.

Вӑрманалла унӑн сассийӗ
Каҫ шӑплӑхне ӗмсе йухать.
Йе сулхӑм, нӳрӗ ҫил кассийӗ
Ҫулҫӑсемпе тем ҫуйӑхать.

Нӳрем те сулхӑн ҫил вӗрнийӗ
Йӑпатнӑ ҫух ват йӑвӑҫа
Ҫуна хӗсет савни йӗрнийӗ
Ыталаса мӗскӗн пуҫа...

Çăлтăр кĕтӳçĕ шупка уйăх
Пĕр вăл анђах пĕлет пĕрре:
Икĕ савнин пит пысăк хуйăх
Уйăрлмаллаçке кĕçĕрех...

Çуллахи вăхăт иртсе карĕ. .
Кайатăп еп .. есир йулатăр...
Кĕтет мана ват Шупашкарĕ,
Сана кĕтет инçе Улатăр...

Пит йăвăр... Кĕçĕр уйăрлатпăр...
Анђах çапах та манас çук.
Хађ вĕренме сăмах паратпăр
Пуçсем ђеђен те çамрăк ђух.

Кайран каллех, каллех килетпĕр
Çак колхосах, çак кĕтесех.
Каллех ĕçе алла илетпĕр
Питре найанлăх çук, тесе...

Шăппăн, тӳлеккĕн ылттăн тухăç
Çунайнă ђух вăрман çинђе
Тавралла шăранса йухаç
Йурăмăрсем çак хирсенђе.

Машшин сассийĕ илем кӳрĕ
Ун ђухнехи çак çĕршыва...
Ах, сывлăш уçă... сывлăш нӳрĕ...
Ав, уйăх... Пĕлĕтсем шăваç...

Мĕн пек илемлĕх йалти каçăн.
Мĕн пек илем—çамрăк кунсем.
Ах, тусăм çаплипех çĕркаçăн
Уйăрлаймасăр... Мĕскĕнсем...

Ак, купăсăн сасси лăпланҫĕ.
Автан та авăтрĕ ҫинҫен.
Теме сиссе пĕр ватă анҫăк
Сас паҫĕ йалăн вĕҫĕнҫен.

— Ну, вăхăт ҫитнĕ... Кĕрсе ҫывăр.
Сывă пул... Кайатăп ир ирех...
Ман ҫĕрере тем пăр пек йăвăр.
Савнин туги те вĕрирех...

Шупашкар, 2-IX-29 ҫул.

## Ҫырлара

Аҫашшӑн та, хавассӑн та
Курӑнать кӑвак тӳпе.
Ах, шухӑшсем, сан ӑсӑнта
Ҫупаҫҫӗ кӗтӳпех...

Ниҫта пӑхса тӗксӗм питсем
Тупаймӑн ес пайан.
Йӗри таврах йулташусем,—
Пурне те пуҫ тайан...

Вӑрман! Вӑрман йӗри таврах!..
Сип-симӗс йӑвӑҫсем...
Ӑш ҫил вӗрет... вӑр-вӑр ҫаврать
Ҫулҫӑ тӑрать вӗҫсе...

Ах, кайӑксен сасси илем!
Илем—хӗрсен кулли!
Мӗнле кӗвве сире пиллем?
Вӗсем вӗт... пуҫ тулли...

Ҫырла тататпӑр—хӗпхӗрлех,
Шапшурӑ ҫӗресе...
Телейлӗҫке! Санпа пӗрлех
Кулаҫҫӗ хӗрӗсем...

— Мишша! Пире савсассӑнҫӗ...
Калаха, сӑввуна...

. . . . . . . . . . . . . . . .

Ах, ҫӗвӗл-ҫӗвӗл сассӑмҫӑм...
Ҫӗтрет, питсем ҫунаҫ...

Ман сӑвӑ, сӑвӑ вӗҫӗмсӗр,
Йухаӑ тӑр шыв пекех...
Кӗт хушӑран ман куҫӑмсем
Тӗллеҫҫӗ ҫеҫеке...

Хӗвел пек йӑл кулсассӑн та
Кулли ун—сар ҫу пек...
Ах, шухӑшсем... сан ӑсӑнта
Ҫупаҫҫӗ кӗтӳпех...

Ҫӑкалӑх, 1928 ҫ.

## Колхос хӗрӗн йуратӑвӗ.

(ЙУРӐ).

Еп колхосран—колхос хӗрӗ.
Еп ҫулӑм пек вӗри.
Ӗҫпе нуша ђӑтнӑ ирех—
Савма тивӗҫсӗри?

Ман пуҫ ҫине ылттӑн ҫумарӗ,
Пулман еп пуйан ҫын.
Ҫампа ман ал та ҫемҫе мар...
Ӳпкелесе ан ђӗн.

Ан каласам, кай, кай, тесе,
Игле ман сӑввӑма:
Еп ӳснӗ тек нуша тӳссе,
Пӗлсем мана савма!

Ҫут тухӑҫран хӗвел ирех
Тухса ҫутатнӑ пек
Савни... ђӗрине еп кӗреп
Кулса... йуратнипе...

Савни. Ех, Ваңђӑ—трактӑрис!
Кам савмӗши сана?
Пуҫ тӑрринђи хавас тӑрри
Вӑл та-ҫке ӑмсанаť...

Ёçре ёшеннĕ, пуç уснаҭ.
Анђах каçпа йалан
Çапах ђăсатăн купăсна
Йанăратса йала.

Сан купăсна илтсен вара
Çунатланаҭ ђёрем!
Ђёрем вĕри, шĕл кăварах...
Аван çак тĕнђере!

Каçђен ёçре пиçнĕ хыççăн
Аванçке савнипе
Пĕрле ларма... вăш, вăш уççăн,
Вĕрет çил савăннипе...

Ах, каçĕ, каçĕ! пит тăрă!
Уйăх—тулли... шупка...
Вăл, çăлтăрлă тӳпе тăрăх
Шуса, пире лăпкаҭ...

Еп колхосран,—колхос хĕрĕ.
Еп çулăм пек вĕри.
Ёçпе нуша ђăтнă ирех.
Савма мана ири?

Еп ӳсвĕçке нуша тӳссе...
Алсем—ёçђен ав, ман...
Ан каласам, кай, кай, тесе,
Пĕлсем мана савма.

Çăкалăх, 1930 ç.

— Уссăр ...

## Вĕренме!

Кĕрхи ир.
Тулта сивĕ те сулхăм.
Кĕрхи ир. Йĕпкĕн тухăç çунат̆.
Сывă пул, тăван йал,
Тăван улăхăм,
Ан йулах йатласа
Ађуна.

Ак, пайан
Ир ирех тăрса тухрăм.
Анђах ман алăмра
Çурла мар...
Йе каçалăк та çук умра,
Çухрăм...
Çухрăмсем те...
Тăван Шупашкар...

Алăмра ман
Пĕр шĕшкĕ туйа та
Хыçăмра—кутамкка уртăнат̆.
Ак, анне... куççулђпе...
Ах, туйатăп,
Ађине вăл
Кĕртесшĕн тăна..!

Йулашки хут
Ӑна ӳкӗтлесшӗн
Тӑван амӑшӗ ӑш куççуљпе.
Унӑн ӑш сӑмахне вӑл итлесшӗн,
Калаçаӑ хӑй тӑван ывӑлпе.

— ...Ес каллех
Вӗренмешкӗн кайатӑн.
„Сывӑ пулӑр“ тейетӗн пире.
Куђанатӑп пайан та,
Ма йатӑм,
Ма йатӑм сана пӗђӗкрен...

Ах, ађам, тен,
Ђарусӑр ађам,
Мӗн тесе еп сана ӑс парамши?
Пӑхас çукçке пире ес пађах,
Тӑрӑшатӑн—
Пӗлместпӗр, такамшӑн...

Ес пире пӑрахса вӗренетӗн...
Ес манатӑн
Тӑван аннӳне...
Çавӑнпа ђӗререн кӳренетӗп...
Йурӗ, йурӗ...
Ватӑлар та
Тӳнер...

Куçӗнђе – ӗçпе хурлӑх куççулӗ.
Нумай ђӑтнӑ çав,
Курнӑ нумай.
Ех, мӑнтарӑн пурнӑç çулӗ.
Шухӑшлап та—
Киђем ђупӑма...

— Уссăр ан йĕр, анне,
Ах, анне, теп.
Уссăр ан тăк вĕри куççуљне.
Еп çеç мар хаљхи кун
Вĕренетĕп,
Йе шыратăп
Телейлĕх çулне.

Çитĕ, çитĕ,
Хаљђђен макăрни те.
Çук, текех куççулпе пулас мар.
Ес итле,
Хаљђђен йĕрнĕçке,
Çитĕ,
Çитĕçке тарăхса тулашма.

Сахал мар
Сан куççуљ шăпăртатрĕ...
Пайан кун та
Çапах хурланан...
Астăван, астăван,
Ес астурăн
Ывăлна
Вĕренме
Хулана...

Ес мана вĕренмешкĕн ăсатрăн.
Таврара тăлăх хир...
Кĕркунне...
Пайан кун хам çула еп тасатрăм,
Çулăм такăр,
Утап хаљ, анне.

Ак, тăватпăр колхос.
Çĕнететпĕр
Тĕнђене.
Пурнăçа.
Хамăра.
Çавăнпа тăрăшсах вĕренетпĕр.
Çавăнпа еп йурлап
Хам йурра.

Кĕрхи ир...
Тулта сивĕ те сулхăм...
Кĕрхи ир... Йĕпкĕн тухăç çунат.
Сывă пул, тăван йал,
Тăван улăхăм
Ан йулах йатласа
Ађуна.

„Пире мантăн“ тесе те ан йулăр.
Çук, ан калăр:
„Килмест вăл“ тесе.
Сывă пулăр пайан,
Сывă пулăр.
Еп манмастăп
Тăван кĕтессе...

Шупашкар, 7-IX-29 ç.

## Сулă çинђи йурă

Ак Атăл, çут Атăл выртаť ман умра.
Ав шăппăн шăваççĕ хуллен икĕ сулă.
Хĕвеле пытаннă, вăрман çулăмра.
Пĕр уççăн сывларĕ каçхи симĕс улăх.

Хуллен ике сулă шăваççĕ шыв тăрăх,
Йăл-йăл йăлкăшаç вуттисем инçетре.
Ах, каçĕ уйар-çке! Уйар та тăп тăрă,
Шăп Атăл çинђе ав пĕр йурă ђĕтрет...

Йурлаť ăна Атăл çынниййĕ вăраххăн,
Ђунне йăпатасшăн çав сулă çинђе.
Ех, уйăх, хуралçă каçхи шăп тĕнђен,
Ма тĕксĕм, киђем-им, сана та хăраххăн?..

Çак Атăл хĕрне каç тухсассăн вара еп,
Илтсессĕн вĕсен йанăран йурриие,
Ăçтан-ха пĕр ним асаилмесĕр тăрайăп,
Ăçтан асаилместĕн пулса иртнине?..

Ах, Атăл ес, Атăл ытла та пит анлă,
Хăш ђух пуçласассăн хумсем авăсма,
Кам ђунĕ, курсассăн, сана хавас мар?
Анђах шыв вăл куççуђпе тăванлă...

Пăхайрăм шур хăйăр ҫине сан урлах,
Мĕн ђул куҫҫуђпе ҫын йунне сăхман-ши?
Мĕн кимĕсем туртнă, ахлатнă пурлак...
Камсемшĕн ахлатнă? Йун ĕмнĕ пуйаншăн!.

Куҫа курăнаť ав тискер пĕр хура ҫын,
Ђĕвет вăл пур ђухăнсене хăй тавра...
Ку кам-ши, тесессĕн, еп калăп: ку Раҫĕн,—
Хастарлă пăлхавҫă. Палађ Мускавра

Унне пуҫне татнă пĕр ним хĕрхенмесĕр.
Ăҫтан хĕрхенес? Хĕрхенў вăл ыйтман...
Пуҫне вăл кастарнă пĕр нимĕн ђĕнмесĕр,
Ҫапла пуҫне хунă касак утаман.

«Пур пусмăрти халăх, ей, тăрăр, вăранăр,
Харам пырсене пĕтерме малалла!..»
Тесе ун йăхравĕ малтан йанăранă
Ҫут Атăл ҫинђе кĕрлесе тăвăлла.

Хастарлă пăлхавҫă мĕнле пуҫне ҫинĕ,
Ҫавна асăнса ав йурлаť Атăл ҫынĕ.
Ҫавна асăнса Атăл хумĕ кĕрлет,
Ҫавна асăнап вĕҫемпе еп пĕрлех...

## Атӑл кӗвви

Вӑш, вӑш ҫил...
Типетҫке сурҫӑк.
Ҫил пӑлхатрӗ Атӑла.
Кӑпӑкланҫӗ Атӑл,
Урҫӗ,
Ҫырана сиксе туллаť.

Атӑл вӗҫсӗр.
Кӗмӗл шавлӑ.
Ӑна шапшурӑ пӑрахуҫӗ
Акӑш пек васкавлӑн
Ҫӑш, ҫӑш, ҫӑш
Касса пыраť.

Ман аннемҫӗм!
Атӑл, Атӑл!
Епӗ санӑн,
Тыт алла!..
Хумсем ҫупрӗҫ
Ҫатӑл-ҫатӑл,
Хумсене еп
Ыгалатӑп...

Хумусем сан
Ҫамрӑк майлӑ

Пит те харсăрăн ђупаç.
Анђах вĕсене нумайлĕ
Ыталайăн
Ќуçупа.

Хăв та ес
Çаплах ђўхенђĕк,
Мĕнле çилĕ
Ђўхенет...
Йуррăм саншăн
Хĕлĕхленђĕ,
Хумсем уçрĕç
Ђĕлхене.

Ес пăлхавçă,
Ес пăлхавлă,
Ес йурлаха хăв йурра:
Хумсемпе
Мĕнле ес кавлĕн
Çыранри шур хăйăра.

Ăна мар,
Хĕвелпе çуллăн
Ир ђуп тунине асил.
Ăна мар.
Ма хăйăр хуллăн?
Мĕншĕн нўрĕ
Санăн çил?

Пурлаксен шăммисем мари
Çав шур хăйăр

Айĕнҫе?..
... Атăл ним те шарламарĕ,
Вĕрҫĕ ҫил хăйăр йенҫен.

Пурлаксен куҫҫулĕ, тарĕ
Мари
Ҫак ҫил нӳррин ҫе?
Атăл ним те шарламарĕ
Хумсем шавлă йурринҫе.

Хумсем сан ма урăҫҫĕ?
Ма питна ес
Кĕмĕллен?
Кăтартмаим, мĕнле Раҫĕн
Вăрҫнă, мĕнле вăрҫнă Йемелен?

Мĕнле сан тăрăх ҫеретле
Йухнă шутсăр ĕмĕрсем...
Мĕнле каҫ епир ҫӳретпĕр
Сан хăватна
Ҫĕмĕрсе...

Ҫук, ҫĕнмерĕ Атăл урăх.
Хумсем ҫеҫ ҫупĕҫ кăтран.
Ҫуп ес, Атăл!
Атăл, урăх
Тĕнҫе урнă вăхăтра.

Шупашкар—Сталинкрат. 1930 ҫ.

## Атӑл ҫинҫи каҫ

Тӗттӗм хуламланҫӗ, сӳнҫӗ Анаҫ.
Пӗлӗт те йалт пӗтрӗ шӑранса.
Мӗн пек шӑплӑх! Мӗн пек тутлӑ канаҫ!
Умра Атӑл ҫут тӗсӗ анҫах...

Вӗренӳ! Ҫӗршавлӑ шкул сассийӗ
Кӑштах ҫеҫ хӑвартӑм еп сире...
Каҫхи ӑшӑ, нӳрӗ ҫил кассийӗ
Ун ҫинҫен ман шухӑша сирет...

Инҫетре тӑван хула кӗрлевӗ.
Еп ӑна саватӑпҫке, савап!
Ҫулхула! Еп санпа пӗрле вӗт
Хурҫӑласшӑн пайанхи сӑвва.

Пӗлепҫке, ҫак Атӑл шӑп ҫиве те
Сӑвӑпа сапмашкӑн хурҫӑ сас.
Сан сассу татах йурра ҫӗнетӗ,
Епӗ ыйтмӑп: мӗнле йурӑ ҫӑсас?

Атӑл ҫилӗ калама ҫук ӑшӑ.
Шупка уйӑх... Иккӗнех тӑратпӑр...
Лӑпкӑ Атӑл тӑрӑх ҫӑшӑл, ҫӑшӑл
Пӑрахутпа хӑвӑрт шутаратпӑр...

Пайан çеç тĕл пултăм ăна епĕ
Тухайсассăн палăпă хĕрне.
Ман ђĕрем çунаť тĕк—ун айăпĕ—
Пáхнă ђух ађашшăн пĕр-пĕрне.

Ун кăкри çинђе çутă „Ким“ паллийĕ
Уйăхра çут çăлтăр пек çунаť.
Вăркăшан çўçне йусаť аллийĕ,
Кăкăрри ĕмет шăн уçăна.

Хĕмне тăкрĕ уйăх шеллемесĕр...
Çилĕ ăшă сывлăшпа ђўхерĕ...
Епĕ ыйтрăм: камăн хĕрĕ есĕ?
Вăл ађашшăн: кăпиттанăн,—терĕ...

Çилé, çилĕ! Калама çук ăшă!
Çилĕ, çилĕ! Мамăк пек çемçе...
Епĕр иккĕн... Çутăлаç мăшăр
Кăвар йевĕр çутă куçсем çеç...

Шупашкар—Сталинкрат, 1930 ç. ийуђ.

## Пуйăс çинҫе

Релсă тăрăх ҫупаť урапа,
Çаврăнаť.
Релсă тăрăх ҫупаť çĕлен —
Пуйăс.
Куçăм! Куçăм!
Асту!
Ытала таврана,
Çĕнĕрен тĕссемпе
Пайан пуй ес.

Çут хĕвелпе лăпкă ир.
Çут хĕвелĕ—хĕр пек.
Йурататтни, тесе
Ыйтами?
Хыт вĕçетпĕр епĕр
Йешĕл симĕс хирпе.
Анлăçке
Урапасен ытамĕ!

Пиншер çын пуйăсра.
Кашни пĕр шухăшпа.
Хăвăртрахҫĕ,
Çитесҫĕ,
çитесҫĕ...

Авăнас релсăсем.
Йăнăшаť кашнă шпал,
Вăшлатса иртет
стантси,
расйесђĕ...

Ђупсам, ђуп
хурçă ут,
Илсе кай малалла.
Йурă, кас тĕнђене,
Пул ес çиçĕм!
Сывă пултăр ыран!
Ăна парăр алла!
Пирĕн тĕл
Пĕрре çеç—
Комунисăм!..

Ђулхула, 6-XIX—30 ç.

## Автопуспа

Автопусӗ пӗр хашкарӗ,
Пӗр вӗҫтерђӗ ҫивӗђђӗн.
Сывӑ пулах, Шупашкарӗ
Епӗр тепре килеђђен.

Сывӑ пулӑ¦ , ҫыннисем,
Пӑхса тӑрса йулӑрах.
Пайан сиктӗр ҫӗнӗ ҫемӗ
Ман хаваслӑ йурӑра.

Хула йулђӗ хыҫала.
Сӑрт хыҫне пытанђӗ...
— Ларса куртӑм, кӑҫалах
Ларасса шанманђђӗ...

Кулат̆ сухала сирсе,
Ман ҫумри муђийӗ.
Умра вӗҫсӗр уйхирсен
Ылттӑнланӑ ҫийӗ...

Умра вӗҫсӗр ҫут инҫет.
Инҫете куҫ шӑвӑнђӗ.
Ҫут хӗвелӗн ҫуттинђе
Тӗлӗрет ҫӗршывӑмҫӑм.

Тĕлĕрмест вăл, йешĕрет,
Ђеђекре çĕршывăм ман.
Хаваспа тулаť ђĕре,
Пăхса пырса ывăнмăн.

Ыраш хумĕ уй урлах
Кусаť, çта çитетши?
Мĕн ђул шнейккă та çурла
Вĕсене кĕтетши?

Молоттилккă колхосра.
Пĕђђенпии тăпађă...
Пĕђђеннийĕ те ăсра
Колхосшăн сасă пађĕ...

„... Вĕсем пурăнаççĕ çĕнĕлле.
Ĕçĕ пулаť хăвăрт,
Сан пур вата ĕнелле
Йерипен те... йăвăр...

„... Çук. Кайатăп, илĕртет
Çав ĕç, вăтама та.
Ав, колхос та: килĕр, тет,
Намăс вĕт, тăма та...“

Пĕђђеннийĕ те ăсра
Колхосшăн сасă пађĕ.
Çĕнĕ пурнăç колхосра.
Тĕп пул ес, тăпађă.

Çип пек тўрĕ çулĕпе
Вĕçтеретпĕр çилле.
Уйар, тăр ă çу—лĕпех
Çут хĕвелĕ çўлĕ...

Ак вăрманĕ.
Ак Кӳкеç...
Апашран иртетпĕри—
Хыçра урăсем ӳкеç:
Лашана хĕртет пĕри.

Хăй лаши çине выртса
Тĕпретет çĕре те.
Автопуспа ăмăртса
Çил пек вĕçтеретĕ...

Ех, айван ут! Мĕн сиксе?
Ҫĕрнуна çĕмĕретĕн
Çтан ҫупса хуса çитен
Çак хурăç ĕмĕре тин?

Кам проппеллĕр ҫуппипе
Сана танлаштарĕ?
Ҫĕрӳ ҫăхă ҫĕппи пек
Вĕçсе тухса тарĕ.

Лаша пыҫĕ, пыҫĕ те
Кам пĕлет, тем пулҫĕ?
Инçете, таçта çите
Кăпăкланса йулҫĕ...

Хăт те мĕн ҫул тĕв ара,
Çул хăйăрĕ шĕвелмĕ.
Ну, вĕçтерҫĕ те вара
Автопусĕ, шелмă...

Сиккипе ҫупан лашан
Усăнҫĕ хӳри те...

Унпа çтанха танлашан?
Ăçтан ун пек çӳретĕн?

Ђуп, автопус, хытă ђуп.
Парсан, пар ăна тăн.
Сăпкари пек пынă ђух
Канлĕн йаранатăн...

Вĕлт! Çиçеççĕ умрисем.
Шăранаť ийулђ çеç...
Автопуса йăмрисем
Ађашласа йулђĕç...

Ађашларĕç çурăмран
Ăшшăн та пит меллĕн.
Те ăш çу? Те çур умра?
Çиçет çеç хĕвелĕ...

Çуркуннехи мар ку, çук.
Çук ун кĕрхи сăн та.
Таврана пăхсан куçу
Йăмăхаťçке ђăн та..

Йешĕл çуллахи сăнсем.
Кам кĕр теме пĕлĕ?
Пит вĕри! Тек ан сĕнсем
Ăшшуна, тăрă пĕлĕт...

Çилĕ вăркăшсах вĕрет.
Тар пите йĕпетрĕ.
Хамăрăнах шоферĕ
Кăнтухтăрĕ—Петрĕк...

Ак, кунта йулаҭ Паҫпак,
Ак, йулаҭ Кĕҫтемĕр.
Ҫак шуйттан ҫине пуҫпах
Ларас ҫукиҫ, темĕр.

Ак, Ҫĕрпӳ йулаҭ инҫе.
Умра Мăн Ђурађăк...
— Пĕр вуниккĕ тĕлĕнђе
Ҫитейсен йураҭђĕ—

Тет муђийĕ. Йăнăшан,
Ҫук, ес йăнăшатăн.
Ак, курмарăн ним нуша—
Ҫитрĕн Канаша та.

Канашра ухлаҭ кунта
Хурҫă паравусĕ.
Вăл та ҫак ҫитес кунтах
Шупашкара куҫĕ...

Куҫĕ Шупашкаралла...
Ӳсĕм хыҫҫăн ӳсĕм...
Канаш. сывă-и? Пар алла!
Килђĕҫ ав хăнусем...

Шупашкар, 29-VII-30 ҫ.

### Ан ман!

Сывлăш пит услă.
Ҫун хĕпĕртет.
Хĕвелĕ хавассăн
Хĕретет.

Тăптăрă пĕлĕт
Ҫĕнет тула.
Маха хĕвелĕ
Кулаĭ?

Мĕншĕн çанталăк
Сăкманĕпеле
Хаҫ хуплаймасĭ
Хĕвеле?

Кам куна калĕ?
Мĕн, еси, çил?
Кунта кил халĕ,
Кил!

... Ан суйха есĕ,
Çук, кай... ан...
Хăв та пĕлмесĕр
Суйан...

Хӗвел патне уҫрӑмӑр
Ҫул. Ан ҫар,
Ҫирӗп утатпӑр!
Анҫах...

Анҫах пур ӗҫхалӑх,
Хатӗр тӑр.
Тӑшман алла
Ан ҫӑстӑр.

Камха пӗлет,
Тен кӗҫӗрех
Тӑвӑл силлет
Ҫӗре.

Кам ӑна калӗ?
Тен ыранах
Кас ыталӗ
Таврана?

Пуҫсем урлӑнах
Хыттӑн ҫиҫсе
Снаретсем ӳкӗҫ
Вӗҫсе...

Тусӑм, итлеха!
Тӑвӑл тухсан,
Ҫӑтӑмлӑх ҫӑлӗ
Тулсан

Пулӑшӗ хамӑрӑн
Вут—сирме
Таврари
Сӗрӗме.

Пĕл, ес, йулташăм,
Вĕт епĕр мар
Тытатпăр малтан
Кăвар.

Пултăр хаљ тăрă.
Кам пуш алпа—
Ыран вăл тăрĕ
Пăшалпа.
Епĕр ўсетпĕр
Кашни кун тан.
Çуки мĕн пирĕн
Танк?

Çунтар, çунтар тăшмана,
Çунтар, ей,—
Йар гашша,
Паттарей!

Ратиохум:
„Алљљо! Алљљо!
Хатĕри?—тет—
Самољот?“

Хатĕр ларан
Айеро-çунаг
Хаљ çĕкленессĕн
Туйăнаť.

Çуки мĕн вăй пирĕн.
Вăй—нумай:
Мĕнле кĕрлет ав
Май!

Кĕтетпĕр сыхланă ђух
Лăпкă ĕçе
Вут тухасса
Кĕçех.

Вăй пирĕн пысăк.
Мĕлйунлă вăй.
Вутпа выљама
Ес хăй...

Йалан епĕр сыхă,
Хатĕр йалан.
Çирĕп тытнă
Пăшала!

Кашни çĕнме хатĕр
Çак кунта:
Пирĕн вăй—
Çаккăнта.

Вĕт епĕр çуралнă
Çак вăхăтра
Çапăçма
Вутра!..

Шупашкар, 27-IV-28 ç.

## Ҫӗнетпӗр епӗрех.

Ӳсеҫҫӗ кикант-савӑтсем,
Колхоссем ӳсеҫ.
Анҫах, тӑшман асавӗсем
Вӗсемшӗн кӗҫӗтеҫ.

Тӑшман ҫавӑнпа мӗн
Ӳсме вӑхӑт памасӑ.
Памин! Памин!
Ӗҫҫынӗ хӑрамасӑ,

Лӑпкӑ оккеанран
Латви таран
Сойусӑмӑр никамран
Хӑватлӑ тӑран.

Тӑшман ҫавӑнпа мӗн
Ӳсме вӑхӑт памасӑ.
Памин! Памин!
Ӗҫҫынӗ хӑрамасӑ.

Ҫак ҫӗнтерӳллӗх ӳсӗм
Вутлӑ ҫеҫекне
Тӑшман, сан сӗлехӳсем
Лапӑртӗҫ, тетне?

Тӑшман ҫавӑнпа мӗн
Ӳсме вӑхӑт памасть.
Памин! Памин!
Ӗҫҫынӗ хӑрамасть,

Ан ман, пур йенҫен те
Тӑшман хӗсет пире,
Ҫапах вӗсенҫен те
Иртсе ӳсетпӗрех!

Тӑшман ҫавӑнпа мӗн
Ӳсме вӑхӑт памасть.
Памин! Памин!
Ӗҫҫынӗ хӑрамасть.

Сыхлан, тӑшмансем ҫикӗнӗҫ
Малтан, хыҫалтан,
Сыхлать ҫӗршывӑн ҫиккине
Маттур хӗрлӗ салтак.

Тӑшман ҫавӑнпа мӗн
Вӑхӑт памасть пире.
Памин! Памин!
Ҫӗнетпӗр епӗрех.

Тухӗ вутлӑ тӑвӑл ак,
Вутлӑ тухӗ ҫил.
Ӗҫҫынӗ ҫеҫ, пӗр вӑлах
Пулӗ ҫӗр хуҫи.

Тӑшман ҫавӑнпа мӗн
Вӑхӑт памасть пире.
Памин! Памин!
Ҫӗнетпӗр епӗрех.

Шупашкар, 19-II-31 ҫ.

## Çĕнтерӳ йурри.

Çĕршывăмçăм!
Çĕршывăм, ман!
Кĕрлетĕн,
вĕрен.
Канма пĕлместĕн,
ывăнман,
Ӳсетĕн
çĕнĕрен.

Пĕлетпĕр
çапăçма епĕр,
Ишме
çĕрĕксене.
Хуса та
иртсе
кайăпăр
Амерĕккăсене.

'.. Тракгăр киканђĕ,
Йалмашĕ,
Сталкрес...
Тăшман
кулаканђђĕ,
Кулас хаљ,
йе

йĕрес?
Пĕлетпĕр
çапăçма епĕр
Ишме
çĕрĕксене.
Хуса та
иртсе
кайăпăр
Америккăсене.
Мула-и
пур ĕççынĕ
Пуçне пĕкĕ,
тайĕ?
Ак пулĕ пирĕн
çĕнĕ
Инти,
Киттайĕ...
Вĕсемшĕн пайан
ним те мар
Вилĕм,
тĕрме.
Епĕр тĕнђене
килтĕмĕр
Ăна
çĕнтерме!
Йалан пирĕн
тар типĕ.
Пăхмастпăр
каç-ире.
Ĕçре—
Хĕрлĕ çарти пек,

сыхă
ĕçре.
Пирĕн штыксенĕн
майĕ—
пĕр:
Тăшман çине
тирме.
Çуралнă
çапăçма епĕр
Çуралнă çĕнтерме!
Сисетпĕрçке
виттĕрех
Пирĕн
ђикĕре
Пит çывăхранах
пит тĕрех
Тĕтĕм
шă; ши
кĕрет.
Пирĕн штыксенĕн
майĕ—
пĕр:
Тăшман çине
тирме.
Çуралнă
çапăçма епĕр
Вилме,
йе
çĕнтерме!
Сисетпĕрçке,
çивĕђђĕн

Штыксем
        хуран
                çиçеç.
**Анҫах**
    пире
        тивиҫҫен
Епĕр —
    хуралçă
        çеç.
Тивсессĕн —
    штыксен майĕ —
        пĕр:
Тăшман çине
        тирме.
Пĕлетпĕр
        çапăçма епĕр
Пĕлетпĕр
        çĕнтерме!
Тăшман
        пăрахмĕ
                пурĕ пĕр
Хăй
    шухăшне.
Анҫах
        килсессĕн
                курăпăр
Хăшĕ —
        хăшне.
Пирĕн штыксенĕн майĕ —
                        пĕр,
Тăшман çине

тирме,
Пултарнӑ
сапӑсма епӗр,
Пултарнӑ
сӗнтерме.
Ҫирӗп тӑрат
ӗҫҫынӗн
Хурӑҫ
Хӗрлӗ ҫарӗ.
Вӑл
кив тӗнҗеие
ҫӗнӗ,
Пуҫ хӗрлӗ—
ҫавӑрӗ,
Пирӗн штыксенӗн
майӗ
пӗр:
Тӑшман ҫине
тирме!
Ҫуралнӑ
ҫапӑҫма епӗр,
Мухтавлӑн ҫӗнтерме!

Ҫулхула, 18-II-31 ҫ.

## Хурăç кайăксем.

Сывлăш та!
çĕнĕ пурнăç
çулĕ.
Сан мар вăл,
тăшман,
ан сиксем!
çӳлĕ
çӳлĕрен,
Çӳлĕрен
Вĕçеç пирĕн
хурăç
кайăксем.

Сывлăшĕ
тарăн та
аслă.
Хурăç кайăксем
хыт вĕçеç.
Хăватлăн йанраҭ
хурçă саслă
Мотторăн
ҫĕтрев
кĕвви çеç.
Итле,

тăрлатаççĕ
тăррилле...
Ђĕремçĕм,
ђĕрем,
ташша йар!
Ку вăл—
ĕççыннин
ескатрилйĕ,
Сасси ун
хитре те
хайар.
Пайани,
çĕрлеи,
ырани,
Ан çывăр,
тăр сыхă
йалан,—
Çак тĕлĕрен сывлăш
вăран ĕ
Хайар,
хăрушă
сасăпала.
Вăл сасă
моттор сасси
пулĕ.
Малтан
вĕçсе улăхĕ
тăшман.
Анђах
хĕрлĕ кайăк
ђас пўлĕ,

Вăл памĕ
кăварпа
аташма.
Ун ђух
хыт ахлатĕ
тупă...
Ун ђух
шăхăрса йĕрĕ
пуљă.
Тăшман
хăйĕн вилĕмне
тупĕ.
Ĕççынĕн
хавас
вĕççĕр пулĕ.
Унђен хаљ,
ӳсетпĕр
утарлă.
Çĕршыв
кул̆лен-кун
çĕнелетĕ.
Ӳтпӳ—
ĕçпеле
хура тарлă.
Анђах ..
пăх
ђикĕ çинелле те ..
Куçа
мăђ
ан хупăр.
Ан çыхăр.

Ĕçе
    ăмăртупа
        шăратăр.
Тăр сыхă!
    пул сыхă!
        Тăр сыхă!
Шывра,
    çĕр çинҫе,
        сывлăшра та..
Сывлăш та
    çĕнĕ пурнăç
        çулĕ.
Сан мар вăл,
    тăшман,
        ан сиксем
            çӳлĕ!
    Çӳлĕрен,
Çӳлĕрен
    Вĕçеç пирĕн
        хурăç
            кайăксем...
Илемлĕн
    вĕçеççĕ
        вĕçе-вĕçĕн.
Вĕçевçисен
    мĕн
        шухăш-ши?
Çĕнес шухăш
    хĕрлĕ
        вĕçевçĕн!

Çĕнӳшĕн
вилме те
çук шик!
Мĕнле
тăрлатаççĕ
тăррилле...
Ђĕремçĕм,
ђĕремĕм,
ташша йар!
Ку вăл—
ĕççыннин
ескатрилйĕ,
Сасси ун
хитре те
хайар!
Ку вăл—
ĕççыннин
сывлăш çарĕ.
Ĕçлер,
сыхланар...
Кĕтер епĕр.
Тăшман
хăруш вăрçă
пуçарĕ—
Епир ăна
мухтавлăн
пĕтерĕпĕр!

Ђулхула, 27-IV-31 ç.

## Ҫуралнӑ ҫӗршывра.

Сывӑ пурнатни,
Еп ҫуралнӑ йалӑм?
Сывӑи, уйхир, ҫаран, вӑрман?
Пӗр ыталӑттӑм—
Ҫитместҫке аллӑм,
Пит нумай пулаӗ сире курман...

Хуларан
Еп таврӑнатӑп авӑ,
Хуларан килетӗпҫке тинех.
Еп йуратрӑм кӗнекепе савӑт
Кӗввине!

Хумханаӗ уйхир
Ытла хаваслӑн.
Йал ҫинђен ађашшӑн
Ҫилӗ вӗрђӗ.
Мана саламлаӗ тек
Ҫурӑк саслӑн
Сукмаксен сӑрнайӗ—
Шӑрђӑк.

Ђӳклемеҫҫӗ халђ,
Хӑҫан йӑванӑн
Ес, ђӳк хурами—ват асанне?

Утнă ђух кашни кĕтес тăванăн
Ађашлаť çемçен куçна санне.

Хапхаран кĕретĕп.
Ех, ђупаççĕ
Ађисем.
Ав, калстăк çакнă хĕрĕ.
— Хаљ кашни вĕт киввинђен хăпаççĕ,
Тейейсе йал манпала пуплерĕ.

Пĕрене çинђе çынсем лараççĕ.
Çĕн хаçат тин çеç илейнĕ мĕн.
Ав, вулаççĕ. Халапа йараççĕ
Пĕђђеншер—
Май çук теç, пĕр нимĕн,

— Мăн-йалта колхос ав,
Нумай пусă.
Тăвас мари çав ĕçе те пирĕн?
Нумай пусă парĕ пысăк усă,
Унпа тутă пулан каçăн-ирĕн...

— Ушкăнра вăл
Ĕçĕн пархатарĕ.
Кам тăман хаљ—
Пайанах тапран.
Ушкăн çеç пур ђухăна хăтарĕ
Ĕмĕрхи
Куççуллĕ асапран.

Ес пĕлен, пĕлен йурагнă йалăм.
Колхосра çĕн пурнăç.
Сан çул çакă.

Анђах пурнăç тунă ђух
Сахалим
Сăтăрлаť
Йал кашкăрĕ—кулакĕ?

Килсе çитрĕ
Машшинсен ĕмрийĕ.
Кулака пуç тайас çукçке урăх.
Йăлтах пирĕн пуласси,
Умрийĕ.
Харам пырĕ.
Шăла çыртса урах.

Тăван йалăм, ман ађалăх сађĕ,
Пўртсем пулин асанне пек ватă.
Мĕн тăван, тесе унран ыйтсађђĕ,
Вăл каларĕ:
— Çĕн никĕс хыватăп.

Çак йалта еп ўснĕ ађаран.
Çак йалта еп курнă çут тĕнђе
Çуралса
Пĕр кивĕ мунђара
Ыраш уламĕ çинђе...

Хађ тăран—
Вунçиђĕ çулхи кађђă.
Хаваспа еп мĕн теме пĕлем.
Ађасем! Курман нумай пулађђĕ,
Килĕрха пĕрре савса илем.

Ир пулсан
Хĕвел тухаť, кулса вăн,

Куллине саватăп еп унне.
Ђеђеклен, çĕршывăм,
Савăн
Çуркунне.

Çĕмĕрте пўркенђĕкпе ђĕркенĕ
Хаљ кайас хĕрсем пек,
Шапшурах...
Шăпђăксем, тек йурлăр,
Ан ўркенĕр
Мухтама
Илемлĕ çак çура.

Шур çеçкине ларнăçке палан.
Çилĕ çеç выљах унпа ађашшăн...
Кунта кашнă йăвăçне паллан,
Кашнийех
Санпа кĕт калаçасшăн...

Ир пулсассăн
Çулçăсен çине
Пăт та пăт тумлаť
Ахах пек сывлăм.
Ун илемлĕ çутă шăрçине
Çуталса, йешĕл курăк,
Уççăн сывлăн...

Йаштак пĕвлĕ хурăн, авăнсам,
Таçтанах курнатăнçке шапшуррăн...
Ман тăван çĕршывăм,
Савăнсам,
Ман тăван çĕршыв—
Йăмра та хурăн...

Ак, пĕве.
Тăптăрă та хитре.
Хурĕсем ишеççĕ шăпăл-шăпăл...
Çакăнта вĕт епĕ пĕҫĕкрен
Ҫăпăлтатса ӳснĕ шăпăл-шăпăл...

Шыв çине ав, усăннă йăмра.
Çулçине вăл
Шыв çинҫе ҫӳхесшĕн.
Тӳлек ҫух ес манăн айăмра,
Пит илемлĕн çутăлса вырт, тесшĕн...

Йешĕрет умра
Сипсимĕс улăх.
Вăл тумланнă пурçăн ҫеҫекрен.
Мĕн унтан ман тĕлĕнсе таккулăх.
Еп кунта вĕт ӳснĕ
Пĕҫĕкрен...

Тĕлĕкри пек халĕ:
Аҫа пуççăн
Кăҫăрт-кăҫăрт
Епĕ тыр выраттăм.
Йе йĕмме тытса хам анне хыççăн
Ывăнса йĕрсе киле пыраттăм...

Пит аванҫҫĕ,
Калама çук селĕм
Таврăнсассăн ĕçлесе уйран
Ҫашăкран сыпма улма кĕселĕ,
Хаҫ тин çеç уçланă ăш уйран...

Çавсене пайан аса илетĕп,
Асилетĕп уйхире тухсан.
Пусă тăрăх эк утса килетĕп
Тавралла
Тырпул çине пăхса.

Кашлăр, кашлăр,
Тырпулсем, йе кашлăр.
Хумсене кустарăр
Кăлтăр-кăлтăр...
Кăнтăрла хĕвел сире ађашлĕ,
Каçхине ађашлĕ уйăх-çăлтăр...

Кашлăр, кашлăр,
Пуçусене тайăр.
Ех, çитес кунсем ытла хитре те.
Сухана та
Ђасах манса кайăр,
Трактăр çеç
Тек сывлăша ђĕтретĕ...

Тăван йалăм—
Ман ађалăх сађĕ,
Пўртсем пулин асанне пек ватă...
Мĕн тăван, тесе ыйтан ыйтсађђĕ,
Вăл каларĕ:
— Çĕн никĕс хыватăп.

Ўксе хăртăр йалт—
Мĕн пур пек хăрăк.
Пурнăç хыттăн малалла йуртатĕ...
Пўртсенђе ак,

Пăхăр çынсем тăрăх
Електро-хĕлхем йухса çутатĕ...

Хуларан ес киле тавăрăнсан
Уйхирте тек хавасланса пурăн.
Кашнă ир
Çут çăл кутне ансан
Хăв ђунтан йуратнă хĕрне курăн.

Ун ђăмăр кăкрийĕ çинђе „КИМ“-ĕ,
Унăн килĕ халĕ—колхосра.
Çĕнелет йал. Пирĕн вăй çуки мĕн
Киввин аллинђен тухма ђасрах.

Вăл санпа сăмах хушаť ађашшăн
Сăмаххи путаť ун кулăра...
Пит çунаç хĕрсем
Ађашăн
Вĕренет пулсан вăл хулара..

Шур инке пек хурăн, авăнсам.
Таçтанах курнатăнçке,
Шапшуррăн...
Ман тăван çĕршывăм, савăнсам,
Ман тăван çĕршыв—
Йăмра та хурăн...

Çут хĕвел, ђухласам тен, ђухла,
Кашнин ђĕрине памăн ес
Сăрăх.
Еп йурра йухтартăм шăпђăкла
Хир вăрмансем тăрăх.

Шупашкар, 1928 ç.

## **Кунсем.**

(СЫПĂК).

I.

Йăлт хупăрланă,
  йăлт...
Кашни хăйрана
  шăл.
Вранкĕл, Теникки,
  ав,
Хĕсрĕ Колђакĕ
  шав.
Вăрçрĕ Йутенĕђ
  хыт
Ватă йӳгенĕ
  йыт.
„Таптăпăр, пĕтĕм!"
  теç.
Пĕлĕтре тĕтĕм
  çеç.

Партти вĕт пирĕн
  пуç,
Партти вĕт пирĕн
  куç!

Вăхăт, ытла та
ан ур.
Пирĕн те вăй-хал
пур.
Ей, ĕҫҫыннийĕ,
тух,
Тăвăл кĕрленĕ
ҫух!
Халăх, мĕлйунăн
тăр!
Йе тата йунăх-
тăр.
Пирĕн тарланă
ӳт?
Ҫук, тăвăрланнă
кӳт!

Партти вĕт пирĕн
пуҫ.
Ей, ĕҫҫынни, ҫул
уҫ!

. . . . . . . . .

. . . . . . . . .

Вĕҫ, йăхрав, ес,
вĕҫ‘
Пурте пăрахăр
ĕҫ!
Вăхăт ытла та
хĕн.
Пурĕпĕр ҫапăҫ,
ҫĕн...

Тытăр, кашниййĕ
  тыт,
Тытăр кашниййĕ
  штык.
Йе çĕнтерӳ, йе
  çук,—
Вилĕпĕр вăрçнă
  ҫух!
Вилĕм кашнишĕн
  пĕр.
Ей вырăн йышăн,
  пĕр.
Вăйлă ĕççынĕн
  çар.
Пурнăç çулне
  уçар!..

Вăвăт,—ĕрлешес
  çил.
Вăхăт,—кĕрешес те
  вил.
Камăн хастарлăх
  пур—
Ирĕкшĕн пуçна
  хур.
Йунпала хире
  çу.
Унсăрăн ирĕк
  çук.
Унсăрăн ирĕк
  мар,

Сăрăхĕ йунлă
  тар...
Вилĕм тĕк вилĕм
  кил.
Йе ĕç ирĕке
  ил!
Тăвăл, ӳле те
  ас.
Вăхăт хаљ—пер те
  кас.
Йухтăрах хĕрлĕ
  йун.
Вут ăшне кĕнĕ,—
  çун...
Вăрçăра çапăçса
  ыр.
Тифпала канăçса
  вырт.
Йе çĕтĕк-çатăки,—
  ђăт.
Йе тăхлан татăкĕ
  çăт...

Вăхăт ытла та
  хĕн.
Пурĕпĕр çапăç,
  çĕн.
Тăвăл кĕрлерĕ
  кĕр...
Хытă ђĕтрерĕ
  çĕр...

. . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . .

* *
*

Пурĕ пĕр вăрçнă
шав...
Пурĕпĕр çĕннĕ
çав!..
Кулах, хĕвел, ес
кул!
Епĕр те уçнă
çул!
Пирĕн мĕлйунлă
вăй
Ирĕке илнĕ
хăй.
Ирĕклĕх—тивĕç
ун.
Ирĕк вуттийĕ,
çун!
Тимĕрĕç, хытăрах
çап!
Хурçă, хĕрлĕ хĕм
сап.
Хыт йанăратăр
лаç.
Вĕт хамăрта халь
влаç!..

II.

Илнĕ, илнĕ епĕр
ирĕке.

Çунтăр, вут ҫĕртетпĕр
  кирĕке.
Такăр пултăр малалла
  утма.
Çĕр ҫинҫеске тумалла
  ҫăтмах!
Мăлатукпа ҫыхăнҫĕҫ
  ҫурла.
Еп пайан ак уншăн ҫеҫ
  йурлап!
Вĕҫ ес, йурă, вирлĕ те
  хастар!
Çĕре урлă-пирлĕ те
  кастар!
Хуйхă-суйхă сăввăма
  кĕмест.
Вăхăт мар халҫ, вăхăт мар
  йĕме...
Куҫҫулҫ мар ман сăвăшăн
  паха!
Çут хĕвелĕни ăшă
  сахал?..

Уй куратăп та — хитре
  уйхир.
Хресҫен ҫынĕн инҫетре
  хуйхи.
Уй кашлаť те хумханаť
  ҫупсах.
Çут хĕвелĕ савăнаť
  пăхса...

Ей, кашла, уйхир, ес, ей,
 кашла!
Ак, проппеллёр кёç кисе
 ташлать!..
Хăть есир калаттăр та,
 ма-ши,
Сăвăра ман трактăр та
 машшин?
Ăна кĕвĕлерĕмĕр
 ирех...
Тен, çуратнă çак ĕмĕр,
 пире.
Йе ÿстерне пурăнăç—
 панҫа
Трактăрпала савăтшăн
 анҫах. .

Вуник çул ак пирĕнпе
 соввлаç.
Савăтсем те тĕтĕмпе
 сывлаç.
Çăра тĕтĕм çÿлĕ те
 хитре.
Çăра тĕтĕм пĕлĕте
 тĕтрет.
Савăнать ҫунăм, илтсен
 шăп ир
Мĕнле саслă савăтсен
 трупи. .

Савăнать ҫун, урама
 тухсан

Ҫухӑнне те кура мар,
ухса
Кармашаҫҫӗ ҫурҫӗсем
ҫӳле...
Шӑп ҫанталӑк, ҫулҫӑсем
тӳлек.
Ей, аванҫке Шупашкар
хули!
Тейӗс килҫӗ ман ҫӑвар
тулли!
Хаваспа ес, ҫӗре, шӳ,
хӗмлен
Кашнӑ утӑм — кӗрешӳ
куллен.
Кашнӑ савӑтӑн йапран
сасси
Тӑшман вӑхӑтне шутлан
ҫасси...
Ҫулӑмпа ес хыпӑнсан
тӗнҫе,
Пусмӑрлӑх ҫухалӗ сан
ҫинҫен!..
Атӑл хӗррине каҫпа
тухан,
Тавраналла ӑш куҫпа
пӑхан.
Ҫилпе тем халапланать
йӑмра...
„Хресҫен ҫурҫӗ"
— капланать
умра.

Мӑнастире мар, пуҫна
  тайан,
Урӑххи саваҫ куҫна
  пайан!..
Майӗпе ӳсетпӗрех
  хуллен.
Апла мар, сехет тӑрӑх,
  куллен!
Кашнӑ угӑм—ӳсӗмлӗх
  палли
Ӗҫҫыннийӗшӗн тӳсӗмлӗ
  аллин..;
Пирӗн ӳсӗм—ҫӗнӗлле
  шкулсем...
Вӗт телейлӗх йенелле
  ҫулсем!..

... Уйӑх ђупрӗ лӑккӑта
  ҫӳле.
Атӑл шывӗ лӑпкӑ та
  тӳлек...
Те ҫил хӑраҫ Атӑла
  килме?
Те ҫут Атӑл ватӑла
  пӗлмест?
Тӳпене ес шӑвӑнса
  тухсан,
Уйӑх, ђунӑм, савӑнсам
  пӑхса!..

. . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . .

Анҫах лăпкă вăхăт вăл,
кĕске.
Кĕҫ кĕрлеесшĕн вут-тăвăл
тискер...
Пире хăнăх пулемет
кĕвви.
Пăр, саланĕ киремет
тĕвви!
Ун ҫухне, ҫуралăх, ҫук,
кисрен.
Санран йулĕ палăк* йун
тĕсрен...

Ей, тăван ҫĕршывăм, ман
анне,
Халăхна кам туламан
санне?
Пултаратпăр, кĕрешме,
тӳсме,
Пултаратпăр ҫĕнтерме,
ӳсме!
Халь тăшманăн шухăштăк
кулма
Млатук, сенĕк хатĕр штык
пулма!..

Шупашкар,
октапĕр—нойапĕр, 1929 ҫ.

---

*) Палăк—памĕтнĕк.

# ТУПМАЛЛИ

Стр.


Ťаван комсомола . . . . . . . . . . . . 3
Ēнĕр—утарнĕк . . . . . . . . . . . . 7
Утарнĕксен маршĕ . . . . . . . . . . . 9
Çук пуçлăх . . . . . . . . . . . . 12
Вăл ђĕрĕ . . . . . . . . . . . . 16
Савăт шавĕ . . . . . . . . . . . . 20
Тырпулшăн . . . . . . . . . . . . 23
Хĕрлĕ опоссем . . . . . . . . . . . . 26
1-мĕш май . . . . . . . . . . . . 30
Интернатсионал кунĕ . . . . . . . . . . 34
Май йурри . . . . . . . . . . . . 40
Хĕрлĕ ђассовой . . . . . . . . . . . 42
Окťапĕр хĕрарăмĕ . . . . . . . . . . . 44
Вĕренўшĕн . . . . . . . . . . . . 46
Колхосри каç . . . . . . . . . . . . 48
Уйăрăлнă каç . . . . . . . . . . . . 50
Çырлара . . . . . . . . . . . . 53
Колхос хĕрĕн йуратăвĕ . . . . . . . . . 55
Вĕренме . . . . . . . . . . . . 57
Сулă çинђи йурă . . . . . . . . . . . 61
Атăл кĕвви . . . . . . . . . . . . 63
Атăл çинђи каç . . . . . . . . . . . 66
Пуйăс çинђе . . . . . . . . . . . . 68
Автопуспа . . . . . . . . . . . . 70
Ан ман . . . . . . . . . . . . 75
Çĕнетпĕр епĕрех . . . . . . . . . . . 79
Çĕнтерў йурри . . . . . . . . . . . 81
Хурçă кайăксем . . . . . . . . . . . 86
Çуралнă çĕршывра . . . . . . . . . . . 91
Кунсем (сыпăк) . . . . . . . . . . . 98



Чебоксары, типография № 1 Чуваньгиза.

Заказ № 1138. Тираж 6100 экз. Чувашлит № 1752.

Ст. ф. Б. 185✕30. Об'ем 3,5 п. л.


Цена 80 коп.
Хакӗ 80 пус
Х—3
Уйӑп Мишши
Молодая сила
Чебоксары
Чувашгосиздат
19 32